И. ЯКОВЛЕВ

# ВЫРТМАРА





# ЙĂЛĂНТАРНИ

Пирĕн атте пасара каймассерен кулачă илсе таврăнатчĕ. Пĕрре çапла пасартан таврăнсассăн, атте пурсăмăра та пĕрер татăк кулачă валеçсе пачĕ. Мана ыттисенчен сахал панă пек туйăнчĕ. Эпĕ кулача илмесĕр, йăлăнтарса, пĕр кĕтессе кайса лартăм.

Атте ман еннелле çаврăнса пăхрĕ те:

— Мĕншĕн илместĕн тата кулачăна?—терĕ.

Эпӗ пӗр чӗнмесӗр ларатӑп. Атте манӑн кулачӑ татӑкне илчӗ те йӑмӑксене валеҫрӗ пачӗ:

— Мейӗр, ҫийӗр Иван татӑкне, вӑл кӗтесре йӑлӑнтарса лартӑр-ха! — терӗ.

Йӑмӑксем вара манӑн татӑка ҫирӗҫ ячӗҫ. Кайран ыйтасчӗ — кулачӑ ҫук.

Ҫын аллинчи кукӑль пысӑккӑн курӑнать, тесе ахаль каламан ҫав ваттисем.





# ЭПĔ ЎКĔННИ

Манăн атте куçĕ курнă чухне, тулти ĕçрен пушансассăн, ялан савăт-сапа тĕплетчĕ, кăшăл çапатчĕ. Вăл ĕçленĕ чухне пирĕн валли выляма хăма татăкĕсем темĕн чухлĕ пулатчĕç.

Пĕрре эпир кўршĕ ачи Кĕркурипе хăма татăкĕсемпе урай варринче вылякаласа ларатпăр. Кĕркури тепле ăнсăртран манăн

пӳрт пеккине ишрĕ пăрахрĕ. Унщăн манăн Кĕркурие ҫилĕ килчĕ. Эпĕ ăна хăма татăкĕпе пуҫĕнчен пат тутартăм. Кĕркури йĕре пуҫларĕ. Анне илтрĕ те:

— Мĕншĕн тиврĕн? Хăвна тивсессĕн аван пулĕ-и? Авă ĕнтĕ вăл киле каять, кампа выльăн вăл кайсассăн?—терĕ.

Кĕркури чăнах та ҫĕлĕкне, алсисене тăхăнчĕ те алăк патнелле утса кайрĕ. Эпĕ нимĕн чĕнместĕп. Тӳсеймесĕр йĕтĕм ятăм. „Мĕншĕн ҫапрăм-ши?" тесе ӳкĕнетĕп хам ăшăмра.

Кĕркури эпĕ йĕнине илтрĕ те:

— Ан йĕр, Алюш, ан йĕр; атя татах паҫăрхи пек выляр,— терĕ. Мана намăс пулчĕ. Чарăнаймасăр тата хытăрах йĕре пуҫларăм. Кĕркури ачашлакаласассăн, йăпаткаласассăн тин чарăнтăм.

Нумай пĕтĕ, сахал ҫитĕ; пĕрле пурăннине мĕн ҫитĕ, тесе юрлаҫҫĕ ваттисем.

Алăкран тухса кайсассăн, аллă тĕслĕ ăс кĕрет.





# ÇУРКУННЕ

Çуркунне хĕвел хĕртсе пăхать. Тулта ăшă. Çил пĕртте вĕрмест. Çŭлте тăрисем юрлаççĕ. Юр ирĕле-ирĕле кăшт анчах юлнă. Урам хушшинчи çырмасем чăл-чăл-чăл! юхса выртаççĕ.

Эпир ачасемпе хăма татăкĕсенчен кимĕ пеккисем турăмăр та пĕр хытăрах юхакан çырмана ятăмăр. Хамăр: „Камăн иртет! камăн иртет!“ — тесе кăшкăркалашса кимĕсем хыççăн чупса пыратпăр.

Çапла чупса пынăçемĕн эпĕ хам умра мĕн пуррине курман та, шыв лупашкине лап! кĕтĕм ŭкрĕм. Кĕпем-йĕмĕм йĕп-йĕпе! Сивве шăнтăм хам!

Кĕпе-йĕм улăштарас тесе, киле чупса кайрăм.

— Ăçта йĕпетрĕн? Епле йĕпетрĕн?—теме пуçларĕ мана анне.

Эпĕ тӳррипех каласа патăм.

— Çук сана кĕпе! Кай, кăмака çине улăхса лар! Ӳлĕм умна-хыçна чипер пăхса çӳре! — терĕ.

Шывăн турачĕ çук, теççĕ.





# ЭПĔ СЕХЕТ ÇĔМĔРНИ

Манăн атте сехет тÿрлетме ăста. Сехет Хĕветки тесен, ăна таçти çын та пĕлет. Ăна кура пĕчĕк чухне манăн та сехет тÿрлетес килетчĕ. Анчах аттесем, эпĕ айваннине кура, мана сехетсем тÿрлетме мар, вĕсен çумне сĕртĕнме те хушмастчĕç. Эпĕ çапах вĕсем килте çук чухне тыткаласа пăхаттăм.

Пĕрре çапла атте пĕр сехете илсе салатса тăкрĕ те тÿрлете пуçларĕ, тÿрлетсен-тÿрлетсен хăй таçта тухса кайрĕ. Анне

кӳрше ларма кайнăччĕ. Пиччесем иккĕшĕ те ирех вăрмана вутта кайсаччĕç. Мана ирĕк пулчĕ: мăлатук илтĕм те сехет урарисене шакка пуçларăм, анчах манăн çапмассерен шăлĕсем хуçăлаççĕ. Ĕçлесен-ĕçлесен каялла çаврăнса пăхрăм та чӳрече витĕр атте килнине курах кайрăм. Часах сехет урарисене хуратăп та кăмака çине улăхса выртатăп. Атте килчĕ те сехете тӳрлетме пуçларĕ. Курать ку: хăш-хăш урапин шăлĕсем хуçăк. Унталла-кунталла пăхкаларĕ те, хайхискер эпĕ кăмака çинче выртнине курах кайрĕ. Ман пата пычĕ те ыйтать:

— Элекçей, сехет урапи шăлĕсене эсĕ хуçрăн-им? — тет.

— Çу-ук, эпĕ мар, — терĕм эпĕ.

— Епле эсĕ мар? Санран пуçне урăх никам та çукчĕ кунта? — терĕ. Унтан атте тытăнчĕ мана ятлама:

— Мĕн тумаллине пĕлместĕн пулсан, ӳлĕмрен пырса ан çыпçăн! — тесе темĕнччен ятласа каларĕ.

Çавăнтан кайран эпĕ нумайччен шухăшласа çӳрерĕм.





# ВЫРТМАРА

Эпир ака-суха ҫинче тата кӗркунне те каҫсеренех лашасемпе ҫаран ҫине выртма каяттӑмӑр.

Пирӗн выртма ҫаранӗ хамӑр ялтан инҫех мар, пӗр-икӗ ҫухрӑмран та ытла пулмӗ. Вӑл ҫаран икӗ ял хушшинче: пӗр вӗҫӗнче пирӗн ял, тепӗр вӗҫӗнче, пӗр-ик ҫухрӑмра, урӑх ял. Икӗ енче икӗ лутра сӑрт. Варринче пӗчӗкҫеҫҫӗ ҫырма юхса выртать. Ҫырма тӑрӑх унта-кунта хура хӑва тӗмӗсем ӳсеҫҫӗ. Ҫав ҫарана

эпӗ лашасемпе темиҫе те кайнӑ. Каймассерен унта ачасем пӗр-пӗр вӑйӑ туртса кӑларатчӗҫ.

Пӗрре Ҫапла эпӗ кӗркунне выртма кайрӑм. Кӗрхи каҫ пит тӗттӗм те сулхӑн пулать; ҫавӑнпа ҫӗр каҫиччен урасем шӑнса кӳтсех каяҫҫӗ. Ачасем пурте пӗр ҫӗре пухӑнчӗҫ те:

— Атьӑр, ачасем, кӗҫӗр кашличӗ ҫунтарар! Кӑҫал кашличӗ нумай! — Ҫапла каласассӑнах, пурте чӑл-пар саланчӗҫ анасем ҫинелле. Ача-пӑча нумаййӑн: пӗр самантра темиҫе купа, пысӑк купасем, урам пек, йӗркерен тӑва-тӑва тухрӗҫ. Унтан вӑл купасене вут тӗрте-тӗрте ячӗҫ. Ак хайхи кашличӗ ҫатӑртатса ҫуна пуҫларе-ҫке! Ҫулӑмӗ ҫӳлелле пӳрт ҫӳлӗш каять. Пӗтӗм ҫаран ҫап-ҫутӑ пулчӗ. Ача-пӑча савӑннипе нимӗн тӑва пӗлмест. Хӑйсем пурте кашличӗ тусанӗпе хуп-хура пулнӑ, куҫ шуррисем анчах курӑнаҫҫӗ. Хӑйсем ҫапах, пӗр-пӗринчен тӑрӑхлакаласа кулса, вут йӗри-тавра чупкаласа ҫӳреҫҫӗ. Шӑри-шари, лӑй-лай! тӑваҫҫӗ: пӗтӗм ҫаран ҫӗр-ҫӗмӗрлет; калӑн темӗн пулнӑ тесе.

Ҫапла шуйӑхкаласа тӑнӑ ҫӗре хамӑр ял насусӗ киле парать кӗмсӗртеттерсе. Ун хыҫҫӑнах тата хамӑр ялтан та, тепӗр ялтан та ҫуран ҫынсем чупа-чупа ҫитрӗҫ. Насуспа килекенсем пирӗн пата пырса чарӑнчӗҫ те ни вӑрҫаймаҫҫӗ, ни ятлаймаҫҫӗ пире. Хӑранипе шап-шурӑ шурса кайнӑ хӑйсем. Пӗҫҫисене шарт! ҫапаҫҫӗ.

— Ку чухнехи ача-пӑча темӗн туртса кӑларӗ! Вара эпир сирӗн ял ҫунать пулӗ тесе! — теҫҫӗ ют ялсем.

— Эпир сирӗн ял ҫунать пулӗ тесе тата! — теҫҫӗ пирӗн ялсем.

Лашисене кӑшт кантарчӗҫ те кайрӗҫ вара килелле шалтӑртаттарса.





# ХӐРАВҪӐ ИВАН

Иван амӑшӗ кӑвас хунӑ та, йӳҫтӗр тесе, ӑна кӑмака ҫине лартнӑ, хӑй кӳрше ларма кайнӑ. Тӗттӗм пулсан, Иван урамран килне таврӑннӑ. Чӗнет ку,—пӳртре никам та ҫук. Хайхискер хӑйӑ ҫутма тытӑнать, кӑмака ҫинче кӗҫ темӗскер пӑшӑл-пашӑл

тунине илтех каять. Ахăр хĕрт-сурт пулĕ ку тесе, Иван шартах сикет те хăййине пăрахсах тара пуçлать. Васканипе тĕттĕм çĕрте турчка тимри çине пусать. Турчки кăна пит аван— шап! тутарать çамкинчен. Иван: — Ах, атьсем, килсе пулăшăрах! — тесе кăшкăрса ярать те тарма тытăнать. Инкек çине синкек: çав вăхăтрах ун ури салтăннă кайнă. Çăпати кантри алăк хушшине хĕсĕнет те, Иван пăлтăра тăсăлса та ӳкет.

— Ай-уй! пĕтрĕм-çке, хĕрт-сурт тытать, кӳршĕсем килсе çăлăрах! — тесе вилес пек кăшкăрать, тет. Иван патне кӳршисем чупса пыраççĕ те йăтса тăратаççĕ, тет. Иван ни вилĕ, ни чĕрĕ, тет.

Кайран хайхи пĕлсен, Иванран кула пуçланă:

— Епле эсĕ йӳçекен чустапа кĕтесри турчкаран хăрарăн? Çитменнине тата ху урунти çăпату та хăратнă сана, — тесе тек кулнă, тет, унран.





# ТĂМАНАПА МУЛКАЧĂ

Тĕттĕм пулчĕ. Тăманасем вăрманта варсем тăрăх çиме шыраса вĕçсе çÿре пуçларĕç. Пĕр пысăк карсак уçланка сиксе тухрĕ те ларса юсанкала пуçларĕ. Çамрăк тăмани калать:

— Мĕншĕн эсĕ çав мулкача тытмастăн?—тет.

Ватти калать:

— Пысăк ытла, вăй çитес çук: эсĕ ăна çаклатăн та, вăл сана чăтлăха сĕтĕрсе кĕрĕ,—тет.

Çамрăк тăмани калать:

— Ак эпĕ ăна хăрах урапа çаклатам та теприпе часрах йывăçран ярса тытам,—тет.

Унччен те пулмасть, çамрăк тăмани карсак çине ярăнать анать. Хайхискер чăнах та хăрах урипе ăна çурăмĕнчен ярса илет те, мĕнпур чĕрни кунăн ӳт ăшне кĕрсех каять, тепĕр урине часрах йывăçран çаклатса илме хатĕрлет. Мулкачи сĕтĕре пуçласанах, тăмана часрах тепĕр урипе йывăçран ярса тытать те шухăшлать: каяймăн ĕнтĕ, тет. Мулкачи карт туртăнать те тăманана çурать пăрахать. Вара тăманан хăрах пĕççи йывăç çине юлать, хăрах пĕççи мулкачă çурăмĕ çине каять.

Тепĕр çул çак мулкача кайăкçă тытать, тет. Вара ун çурăмĕнчи ӳт илсе ларнă тăмана чĕрнисене курса: ку чĕрнесем кунта ăçтан килсе ларнă-ши тесе шалт тĕлĕнчĕ, тет.

